# ЭПИР ХАҪАТ КĂЛАРАТПĂР



«Хыҫалти парта» черетлĕ номерĕ пичетрен тухнă. Кун ҫути курнă материалсене ҫамрăк-журналистсем пĕтĕмĕшле хак параççĕ, ҫитес номере мĕнле материалсем каяссине сӳтсе явнă самант.



«Куча-мала» ачапăча передачин тĕп сăнарĕпе Плюсоншпа Оля Аксяндарова тата Женя Евдокимов корреспондентсем ӳкерĕннĕ самант.

Аха, ҫакăн ҫинчен пĕртте ҫырманччĕ! Редакци хаҫатра пичетлемелли черетлĕ шедевр ҫырать.



Типографинчен килнĕ хаҫата фальцовка тунă самант



Ну-с! Хăҫан, ăҫта, мĕнле? Дима Соколов корреспондентран нимĕн те пытарма ҫук





Хаҫат тухнă! Ирина Венедиктовна Осипова шкул директорĕ «Хыҫалти партăра» хăйĕн ҫинчен компромат шырать. Шăпăрлансене пĕлсе ҫитереймĕн, часах хаҫат геройĕ пулса тăма пулать.

## ИНТЕР@КТИВ



## КЛАСТАШСЕНЕ ШЫРАР—И?

**Кăҫал-и е ҫитес ҫулсенче-и паян парта хушшинче ларакансем шкула пĕтерсе ҫĕр-шыв тăрăх саланĕҫ.**

Шкул саманчĕсене аса илме пĕрле пуҫтарăнма та ҫулсерен йывăрланса пырать — ҫемье, вĕренӳ, ĕҫсем. Анчах та шкулти юлташсемпе, эсир вĕсем ăҫта пурăннине пĕлмесен те, шыраса тупса хутшăнма пулать. Ҫапла май Интернет туса парать.

WWW.odnoklassniki.ru сайта кĕрсе пăхар-ха. Кунта Раҫҫейри пур шкулта пур темелле. Эпĕ Калайкасси шкулне те тупрăм. Шел, унта пĕр ҫын кăна регистрациленнĕ. Вăл 1982 ҫулта Калайкасси шкулне пĕтернĕ Валера Костенко. Валера Кострома хулинче пурăнать, унтах ĕҫлет.

## УСĂЛЛĂ ХИМИ

Вăтам шкулта вĕренекенсене хими кичем те килĕшмелле мар ăслăлăх пек туйăнать. Alhimik сайт шкулти лаборатори тата контроль ĕҫĕсенче шăна хăваласа вăхăта сая ярса вĕренмесĕр юлнисене малтисен ретне хăвăрт ҫитерме пултарать. Сайта ҫакансем тĕплĕ справочникпа паллашма, органика тата органика мар веществосене классем ҫине пайлама, кăсăклă опытсем иртттерме пултараççĕ. Виртуаллă репетитор та химие лайăх пĕлме пулăшать. Сайт адресĕ: www.alhimik.ru

